Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

53 (9195) № ✵ 2006 çулхи майăн (çу уйăхĕн) 17-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## КАНИКУЛТА МĔН ТĂВĂПĂР?

**Халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче специалистсем ĕç шыракансене вырăн тупса парассипе нумай мероприяти ирттерeççĕ. Çитĕннисене пулăшнисĕр пуçне кунта ачасене укçа ĕçлесе илме майсем туса парассипе те тăрăшаççĕ. Паянхи хăна - центрăн директор çумĕ В.А.ЕГОРОВ - шăпах çакăн çинчен каласа парать.**

- Каникул вăхăтĕнче тата вĕренмен чухне 14 çултан пуçласа 18 çул тултарнă ачасене ĕçпе тивĕçтерессипе тимлетпĕр. Кăçал çеç центр çул çитменнисене вăхăтлăх ĕç вырăнĕ туса парассипе 11 килĕшӳ тунă. Январь-апрель уйăхĕсенче 336 çамрăк хăйсен енчĕкне хулăмлатрĕç.

**- Сирĕн урлă вырнаçнă ачасене хăш предприятисемпе организацисенче курма пулать-ха?**

- «Заготовитель» тулли мар яваплă общество тата «Чăвашпотребсоюзăн» Ишлей райповĕ темиçе çул пирĕнпе килĕшӳ тăваççĕ. Акă вĕсенче 131 шкул ачи макулатура тата çĕтĕк-çатăк пухрĕç. «Халăха социаллă пулăшу паракан центр» РПУпа калаçса çул çитмен 48 ача Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пулнисене тата тыл ĕçченĕсене пулăшрĕç. Ишекри, Ишлейри, Тутаркассинчи шкулсенчи «тимуровецсем» социаллă ĕçченсем пек уроксем хыççăн вăрçă терт-нушине курнисен хваттерĕсене тасатса, тирпейлесе пачĕç. Лавккана çӳрессi, аптекăран эмел илсе килесси - вĕсен тивĕçĕ пулчĕ. Уйрăм çуртра пурăнакансене юр



тасатса, шыв йăтса, вутă çурса, выльăх-чĕрлĕхе пăхса пулăшрĕç. 31 ĕçпе вăрçă ветеранĕ çамрăксемпе кăмăллă юлчĕç.

Çуркунне тавралăха тирпей-илем кĕртесси пĕрремĕш вырăнта тăрать. Акă апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа майăн 5-мĕшĕччен пирĕн центр направленийĕпе 137 шкул ачи вырăнти территорие тасатассипе тимлерĕç. Çавна май 8 шкулта экологи бригадисем йĕркеленчĕç: Кӳкеçри шкул-интернатпа, Чăрăшкассипе, Çĕньял-Покровскипе, Тренккассипе, Кăшавăшпа 20-шер ача, Шемшерте 22 вĕренекен, Мăналта 14 çамрăк, Иккассинче 21 хĕрпе каччă вĕсенче ĕçлерĕç.

**- Укçа тӳлессипе мĕнлерех йĕрке-ха?**

- Хăш предприятипе е организаципе килĕшӳ тăватпăр, ачасене ĕçленĕшĕн вĕсем хăйсем тӳлеççĕ. Унсăр пуçне тата центр хăй пулăшмалла кĕмĕл парать. Акă макулатура тата çĕтĕк-çатăк пухакансене «Заготовитель» ООО тата Ишлей райповĕ ĕç укçи тӳленĕсĕр пуçне центр федераллă бюджетран 278,71 тенкĕ материаллă пулăшу кӳнĕ. Ватăсене пулăшакансен уйрăм счечĕ çине 162,58 тенкĕ 7 куншăн куçнă.

**- Умра - çуллахи каникул. Плансем мĕнле?**

- Центр çул çитмен 324 ачана ĕçпе тивĕçтерме планлать. Ял хуçалăх предприятийĕсенче тăрăшмалли, Кӳкеç поселок территорине хăтлăх кĕртмелли, эмел курăкĕсем пуçтармалли, чечек клумбисене пăхса тăрасси - темĕн те пулĕ. Ачасем хăйсем çеç ан ӳркенччĕр.

**- Тавах калаçушăн.**

**А.СӲСМЕТ.**

**✵ Тутаркассинчи ветерансем ачасемпе кăмăллă.**

## ЛАГЕРЬСЕНЕ - ПУТЕВКĂСЕМ

**Пĕр-пĕр лагерьте пулса курасси ачашăн тем пысăкăш савăнăç. Çĕнĕ вырăн, çĕнĕ туссем, çĕнĕ мероприятисем... Вĕсен кăмăлне, тĕппипе илсен, РФ социаллă страховани фончĕ тивĕçтерет. Унăн республикăри уйрăмĕн пирĕн районти консультант-уполномоченнăйĕ З.П.ГОРБУНОВА ачасен канăвĕпе çыхăннă ыйтусене хуравлать:**

- 15 çулхи е 15 çула çитмен пур ача та çĕршыври санаторисенче, хула çумĕнчи е шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетекен лагерьсенче канма пултараççĕ. Страхланнă граждансен ачисен путевкисене социаллă страховани фончĕ тӳлет. Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен вăй çитереймен организацисен ĕçченĕсен ачисен путевка хакне 100 процент таранах тӳлетпĕр. Кунта бюджет организацийĕсен çак тĕллевпе укçа уйăрма май çуккине кăтартакан тупăшпа тăкак сметин копине тăратмалла. Ытти организацисенне 50 процентне саплаштаратпăр.

**- Путевка уйăрассин те хăйĕн йĕрки апла?**

- «Ачасене сыватасси» статьяпа бюджетра пăхса хăварнине тĕпе хурса çуллахи каникул вăхăтĕнче вĕсен сывлăхне çирĕплетме путевкăсене çакăн пек уйăрма палăртнă. **100 ача пуçне:** финанс тĕлĕшĕнчен путевка хакне тӳлеймен бюджет сферинчи организацисемшĕн - **15**, укçа-тенкĕ енчен йывăр лару-тăрури предприятисемшĕн - **2**; пĕрлĕхлĕ социаллă налук тӳлекен ытти организаци-страхователсемшĕн - **17**; ятарлă налук режимĕ çине куçнă организацисемшĕн - **1** путевка уйăраççĕ.

**- Апла кăçалхи кăтартупа паллаштармăр-ши?**

- 2006 çулта ачасен канăвне йĕркелеме, сывлăхне çирĕплетме руспубликипе 83 миллион та 700 пин тенкĕ пăхса хăварнă. Ку вăл 33014 ачан сывлăхне çирĕплетме çитет. Çулталăк тăршшĕпех пĕр ачана талăкне 450 тенкĕ уйăрнине пăхса 21 кун çамрăксем «Утесра» тата «Чайкăра» канма пултараççĕ. Путевка хакĕ 9450 тенкĕпе танлашать. Ку санаторисенче юн çаврăнăш, сывлав, апат ирĕлтерекен органсене сыватаççĕ. Республикипе кунта 1800 ачана яма палăртнă.

Хула çумĕнчи ача-пăча сывлăхне çирĕплетекен лагерьсенче 14214 ача канмалла. Сумми пĕтĕмпе 54 миллионпа танлашать. Путевка хакĕ 4900 тенкĕ.

Тăван кĕтесрен, çывăх çынсенчен аякка çӳрес мар текенсем шкул çумĕнчи лагерьте сывлăха çирĕплетме пултараççĕ. Вĕсенче хальлĕхе 17000 ачана вырнаçтарма палăртаççĕ. Талăкра пĕр ача пуçне апат валли 35 тенкĕ уйăрнă. Пĕлтĕр ку сумма 32 тенкĕпе танлашнă. Иртнĕ çулсемпе танлаштарсан путевкăсен хисепĕ ӳссех пырать. 2004 çулта пирĕн районтан санаторисенче 74 ача каннă, пĕлтĕр 25 вĕренекен нумайрах. Хула çумĕнчи лагерьсенче канакансем те 10 ача хушăннă.

**А.АРДАЛИОНОВА.**

✵ **Президент стипендиачĕ**

## ӲРКЕНМЕН ÇАМРĂК

Яла çамрăк специалист ĕçлеме килсен çĕнĕ вăй хушăнать, ыранхи куншăн шанчăк çуралать. Йывăр лару-тăруллă хуçалăхсенче уйрăмах шутра вĕсем. Пуçарулăхĕпе ĕçченлĕхĕ малашлăхри аталанушăн вырăнлă-çке. «Прогресс» ЯХПКра та çак шухăш тĕпре. Бригада ĕçченĕ, водитель е повар - пур çĕрте те тăрăшулăхпа палăраççĕ çамрăксем.

Бухгалтерта пилĕк çул вăй хуракан В.Н.Виноградова акă кăçал Президентăн стипендине илме тивĕçлĕ пулса тăчĕ. Мамăшри шкулта пĕлӳ пухнă хыççăн электромеханика колледжне вĕренме кĕрет вăл. Каярахпа бухгалтер специальноçне тарăнрах алла илме Чăваш патшалăх университетне çул тытать. Хушнă ĕçрен пăрăнса тăма хăнăхман чăваш пики, юлташĕсемпе ĕçтешĕсем хушшинче те яланах тĕслĕх вырăнĕнче. Шкулта вĕреннĕ чухнехи активлăхĕпе правурлăхĕ халĕ те пĕтмен-ха. Ĕçре е обществăлла ĕçре - пур çĕрте те малти вырăнта вăл.

**А.ИЗМАН.**

✵ **Çырав**

## ШĂНКĂРАВЛАСА ПĔЛМЕ ПУЛĔ

Пирĕн çĕршывра ял хуçалăх переписĕ иртмелли кунсем çывхарсах пыраççĕ. Çавна май ыйтăвĕсем те нумайланаççĕ: мĕншĕн ăна йĕркелеççĕ-ха, мĕнле майпа иртет, унăн кăтартăвĕпе кайран мĕн тăвĕç...

«Тĕрĕсех, ыйту нумай. Çапла пулмалла та. Ара, яла «инвентаризацилеменни» 86 çул çитет-ха та. Патшалăх статистикин федераллă служби майăн 10-мĕшĕнче «хĕрӳ лини» уçрĕ.- пĕлтерчĕç Чăвашстатăн районти уйрăмĕнчен. - Малалла 8-800-2006-0-07 нумай каналлă номерпе шăнкăравласа та хурав пĕлме пулĕ. Ăна ас туса юлма çăмăл. Çырав 2006 çулта 7-мĕш уйăхра, июльте, иртет. Унччен кану кунĕсемсĕр пуçне ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 9 сехетчен хăвăр шухăшăра пĕлтерме, ыйтусем пама пултаратăр. Сăмах май, çак справочнăй 4 çул каялла иртнĕ халăх çыравĕнче ĕçленĕ. Вăл кунашкал служба усăллине тата кирлине кăтартса пачĕ».

Статистика уйрăмĕн специалисчĕсем çавăн пекех кирек хăш регионтан та тӳлевсĕр шăнкăрав тума май килнине каларĕç. «Хĕрӳ лини» çырав вĕçленсен, июлĕн 25-мĕшĕнче, ĕçлеме чарăнĕ. Апла пулсан, шăнкăравлăр.

**А.АЛИНИНА.**

*— Майăн 18-мĕшĕ - Музейсен кунĕ —*

## *ХИСЕПЛĔ МУЗЕЙ ĔÇЧЕНĔСЕМ!*

***Сире пурне те Пĕтĕм тĕнчери музейсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.***

***Эсир усăллă ĕç туса пыратăр, аваллăха упраса, иртнине асра тытса, паянхи пурнăçа хак пама пулăшатăр.***

***Музей ĕçченĕ - анлă тавракурăмлă ĕçчен. Эсир пулăшнипе чĕмсĕр музей предмечĕсем çын чĕлхипе калаçаççĕ, халăх патне тĕрлĕ информаци çитереççĕ.***

***Районта пухнă культура пуянлăхне упрас тата пуянлатас ĕçре пултаруллă та тăрăшуллă пулнишĕн чĕререн тав тăватăп.***

***Малашне те кулленхи ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ сунатăп, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей пултăр.***

**А.КНЯЗЕВ,**
**Шупашкар районĕн пуçлăхĕ.**

✵ **Министерство кунĕ**

## ТАСАЛĂХ ЫЙТĂВĔПЕ

Ыран пирĕн районта Тарифсен республикăри службин кунĕ иртмелле. Ирхине 9 сехетре район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев патĕнче тĕл пулсан программăпа килĕшӳллĕн 3 ушкăн район тăрăх тухĕ. Пĕрремĕш ушкăн - ăна тарифсен республикăри службин руководителĕ А.Б.Васильева тата район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев ертсе пыраççĕ - пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пĕрлĕхлĕ заказчик дирекцийĕнче, Кӳкеç ял тăрăхĕнче, «ЧувашАгроМаркет» предприятире пулĕ. Тепĕр икĕ ушкăнĕ Ишлей, Вăрман-Çĕктер, Тутаркасси поселенийĕсене çитмелле. Вырăнти лару-тăрупа паллашсан кăнтăрла хыççăн пĕтĕмлетӳ иртĕ. Министерство кунĕн тĕп ыйтăвĕ - хамăр таврари тирпейлĕх.

**А.ПОРТНОВА.**

✵ **Республика кунĕ умĕн**

## ÇĔРСЕНЕ ТИРПЕЙЛЕМЕ ХУШНĂ

Паллă ĕнтĕ, кăçалхи Республика кунне ирттерме палăртнă конкурсра Сĕнтĕрвăрри хули çĕнтерчĕ. Уяв кунĕнче Вятка Федераллă трассăпа, вăл шутра пирĕн район çĕрĕ тăрăх та, Сĕнтĕрвăррине сахал мар сумлă делегацисем иртмелле. Çавна май çул хĕрринчи уйрăмах курăмлă уй-хирсемпе лаптăксене тивĕçлĕ шая кĕртсе çитерме хушнă. Ку тĕлĕшпе республикăн ятарлă комиссийĕ те пур. Нумаях пулмасть çак ыйтупа района Ял хуçалăх министрĕн çумĕ В.Александровпа уйрăм пуçлăхĕ Г.Тихонов çитнĕ. «Гвардеец» ПУП, Кадыков ячĕллĕ, «Атлашевский», «ЧувашАгроМаркет» хуçалăхсен çĕрĕсене мĕнле йĕркене кĕртнипе кăсăкланнă. Палăртнă кун тĕлне вĕсене тирпейлесе çитерейменнишĕн Шĕнерпуçсемпе Çĕньялсене асăрхаттарса хăварнă.

**А.ВАНИНА.**

## ЧĂВАШ СПОРТСМЕНĔСЕМ МАЛТА

Иртнĕ канмалли кунсенче хăвăрт утассипе 2-мĕш Тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсем (Испани, Ла-Корунье) пулнă.

Раççей команди йышĕнче хутшăннă чăваш спортсменĕсем унта лайăх кăтартусемпе палăрнă. Олимпиада Иванова 20 çухрăмлă дистанцире иккĕмĕш, юниорсем: 10 çухрăмлă дистанцире - Вера Соколова пĕрремĕш, Александра Кудряшова иккĕмĕш, арçын-юниорсенчен Алексей Григорьев çав дистанцирех виççĕмĕш вырăна тухнă. Тăваттăн кайнă, тăваттăшĕ те призлă вырăнсемпе таврăннă.

**В.ВАСИЛЬЕВА.**

**«Тăван Ен» хаçата манса ан кайăр çырăнма**

**2006 çулхи иккĕмĕш çур çула, пĕлетĕр ĕнтĕ, унчченхи хакпах, 146 тенкĕпе, çырăнтараççĕ, Чăваш пичет киоскĕсенче тата пĕчĕкрех, редакцире вара 85 тенкĕпех çырăнтараççĕ.**

**Паян тумалли ĕçе ырана ан хăварăр, «Тăван Ене» çырăнма манса ан кайăр!**

✵ **Синоптиксем пĕлтерне тăрăх**

**Юн кун, майăн 17-мĕшĕ**
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, çумăр çăвать
кăнтăрла +11... +13
çĕрле +2... +4

**Кĕçнерни кун, майăн 18-мĕшĕ**
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах çумăр çăвать,
кăнтăрла +9... +11
çĕрле +4... +6

**Эрне кун, майăн 19-мĕшĕ**
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăнтăрла +11... +13
çĕрле +2... +4

**Шăмат кун, майăн 20-мĕшĕ**
уяр çанталăк,
кăнтăрла +12... +14
çĕрле 0... +2

# ТӖП ФАКТОР - ҪЕМЬЕ

**Ҫапкаланчӑк тата правӑна пӑсакан ачасем ан пулччӑр тесе профилактика системине пурнӑҫлассине тытса пырать район администрацийӗ ҫумӗнчи ҫул ҫитмен ҫамрӑксемпе ӗҫлекен комисси. Унта тӗрлӗ ведомствӑсен специалисчӗсемпе инспекторӗсем ҫул ҫитменнисен ыйтӑвӗсене сӳтсе яваҫҫӗ. Комиссире учетра тӑракан ачасемпе калаҫу ирттереҫҫӗ. Паян редакци хӑни асӑннӑ комиссин секретарӗ С.В.ЧЕРНОВА пирӗн ыйтусене хуравлать.**

**- Светлана Васильевна, эсир нумай ҫул учительте ӗҫленӗ. Халӗ те ачасемпе, ытларах чух йывӑр характерлисемпе, тӗл пулатӑр, вӗсен психологине те лайӑх ӑнланатӑр. Сирӗн шухӑшпа, мӗншӗн-ха ача-пӑчаллах саккун, комисси аллине лекеҫҫӗ?**

- Кашнин сӑлтавӗ тӗрлӗрен пулсан та пӗр фактор - ҫемьери лару-тӑру - ачан шӑпине яланах витӗм кӳнӗ те, кӳрет те. Ача килте мӗн курнинчен вӗренет тесе ахальтен каламан. Уйрӑмах ниҫта та вӑй хумасӑр ӗҫкӗ шухӑшӗпе пурӑнакансен ачисем воспитанисӗрех юлаҫҫӗ. Тепӗр енчен, укҫалла, ялан ӗҫлӗ ҫемьерисене валли те ҫителӗклӗ тимлӗх лекмест. Ачасемшӗн чи лайӑх тӗслӗх - ашшӗ-амӑшӗ. Кун пирки педагогикӑпа психологире те нумай каланӑ, пурнӑҫ та ӗнентерет. Комиссие пыракан аслисене те ҫакнах калатпӑр, анчах шел, вӗсене тӑн памалли вӑхӑт кая юлнӑ ӗнтӗ. Пирӗн патра учетра, сӑмахран, 46 ӑнӑҫсӑр тата 32 «рисклӑ» ҫемье тӑрать. Вӗсенчи 166 ҫул ҫитмен ача пурнӑҫӗ ҫинҫе ҫип ҫинчи евӗр - хӑйсем тӗллӗн тенӗ пекех ҫитӗнеҫҫӗ. Кирек мӗнле ӳсен-тӑрана е чӗр чуна пӑхса тӑмасан тискерленсе каяҫҫӗ, ача та тимлӗхсӗр ютшӑнчӑк пулса юлать.

**- Эсир общество комиссисемпе пӗрле хутшӑнса ӗҫлетӗр. Ҫакӑ мӗнле усӑ парать?**

- Кӑҫал комисси тӑхӑр лару ирттерчӗ. Тутаркасси, Ҫӗньял поселенийӗсенчи обществӑлла комиссисен ӗҫӗпе паллашрӑмӑр. Тӗрӗссипе, эпир пӗр ӗҫех тӑватпӑр. Вырӑнтисен хӑйсен тӑрӑхӗнчи ҫынсемпе тачӑрах та хутшӑнма майсем пур. Вӗсем йӑлтах курса-пӗлсе тӑраҫҫӗ. Хӑйсем патӗнче учета илеҫҫӗ, калаҫу ирттереҫҫӗ, килӗсене ҫитсе килеҫҫӗ. Пирӗн комисси те тӑтӑшах ҫула тухать. Кӑҫал Шӑмӑш, Тренккасси, Тутаркасси, Тӑрӑн, Кӳкеҫри шкулсенче тата интернатра профилактика кунӗсем ирттернӗ. Ҫӗньялта ҫапкаланчӑк ачасене тупса палӑртас ведомствӑсем хушшинчи акци шучӗпе анлӑ лару пулчӗ. Условнӑй майпа айӑпланнӑ ҫул ҫитмен ҫамрӑксем пурӑнакан ялсене, профилактика обьекчӗсемпе клубсенчи дискотекӑсене ҫӗрле рейда та тухаҫҫӗ комисси членӗсем.

**- Ҫапах та, сирӗн пата ытларах мӗнле протоколсем килеҫҫӗ?**

- Административлӑ йӗркене пӑснишӗн ҫырнисем. Кӑҫал ҫеҫ ун пеккисене 91 ӗҫ пӑхса тухнӑ. Вӑл шутрах ашшӗ-амӑшӗсене тивӗҫлӗ воспитани параманшӑн 74 протокол ҫырнӑ, ҫул ҫитмен 12 ҫамрӑка ӳсӗрле ҫӳреннӗшӗн айӑпланӑ. Юлашки вӑхӑтра чукун ҫул урлӑ юраман вырӑнта каҫнӑшӑн та протоколсем ҫитрӗҫ, 8 ҫамрӑка асӑрхаттарма тиврӗ. Пурӗ кӑҫалхи виҫӗ уйӑхра 49 ҫамрӑк тӗлӗшпе ӗҫсем пӑхса тухнӑ.

**- Светлана Васильевна, сирӗн комисси нумай ачан пурнӑҫне тӳрлетме пулӑшать, шӑпине ырӑ енне улӑштарать. Анчах та тӑрӑшнине шута хумасӑр кукӑр ҫултан пӑрӑнманнисем те пур вӗт-ха...**

- Шел пулин те, ҫапла. Воспитани парасси пӗр кунхи ӗҫ мар-ҫке, йӑлтах амӑш сӗчӗнчен пуҫланать. Тимлӗхсӗр ачасене пулӑшас тесе мӗнпур вариантсемпе усӑ курма тӑрӑшатпӑр. Шкултан пуҫӗ-йӗрӗпех писнисене ӗҫе тивӗҫтерекен центр урлӑ ваканси тупса параҫҫӗ, специальноҫ илме те пулать. «Условниксем» ҫумне, куҫран вӗҫертес мар тесе, обществӑлла воспитательсем, вӗсем ытларах чух вырӑнти депутатсем, ҫирӗплететпӗр. Ҫапах та, ачасен пурнӑҫӗпе кӑсӑкланнине, ырӑ тунине туйса илсен, вӗсем хӑйсем те шанӑҫа тӳрре кӑларма тӑрӑшаҫҫех пуль тетӗп.

**- Тавах калаҫушӑн.**

**А.ИЗМАН калаҫнӑ.**

# АСЛӐ ҪӖНТЕРӖВЕ ХАЛАЛЛАСА

Ҫӗньял, Шӑмӑш тӑрӑхӗнчи ялсенче, пӗтӗмпе унта 7 ял кӗрет, пуринче те Аслӑ Ҫӗнтерӳ 61 ҫул тултарнине кӑҫал та тивӗҫлипе паллӑ турӗҫ.

Майӑн 5-мӗшӗнче вӑрҫӑ участникӗсемпе тыл ӗҫченӗсем Шӑмӑшри шкула пухӑнчӗҫ, вӗсене унта шкул ачисем саламларӗҫ. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗ Ф.И.Иванов фронтри вӑхӑтсене аса илчӗ, вӑхӑт ҫитсен ачасене ҫӗршыва тивӗҫлӗ сыхламалли ҫинчен каларӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи юрӑсене юрларӗ.

Участниксен йышӗ сахалланса пырать. Майӑн 8-мӗшӗнче Питукасси ялӗнче те пысӑк уяв иртрӗ, вӗсем вӑрҫӑра вилнисене асӑнса лартнӑ палӑк умне пуҫтарӑнчӗҫ тата ҫак кунсенче пирӗнтен уйрӑлса кайнӑ вӑрҫӑ участникне Леонид Никифорович Демьянова асӑнса пӗр минут шӑп тӑчӗҫ. Ял халӑхне саламлама Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ артисчӗ М.Туринке килнӗ, вӑл хӑй юррисемпе савӑнтарчӗ, ҫавӑн пекех кунти халӑха ял старости Ю.Ф.Чернов, ветерансен ку тӑрӑхри ертӳҫи К.П.Михайлова, вырӑнти ял депутачӗ Н.Е. Емельянов ӑшшӑн саламларӗҫ, Н.Е. Емельянова уява ирттерме укҫа-тенкӗпе пулӑшрӗ. Питуккассисем ҫак кунах ял уявне те ирттерчӗҫ, унта тӗрлӗрен спорт ӑмӑртӑвӗсем пулчӗҫ, мала тухакансене парнесемпе чысларӗҫ. Спорт ӑйӑйисенче кӳршӗллӗ Шӑмӑш, Чумкасси ялӗнчи спортсменсем хутшӑнчӗҫ. Ҫак уява хатӗрленсе ирттерме ялти культура ӗҫченӗ - библиотекарь Н.Н.Павлова нумай тӑрӑшрӗ.

✵ ✵ ✵

Майӑн 9-мӗшне - Ҫӗнтерӳ кунне Янашкассинче те ҫӳллӗ шайра ирттерчӗҫ, унти клуб заведеющийӗ Л.В.Васильева хатӗрленипе ачасене мӗн пӗчӗккисенчен пуҫласа салтак ҫулне ҫитнисем таранах халӑх умӗнче хӑйсен пултарулӑхне кӑтартрӗҫ. Янашкассисем умӗнче Ф.И.Иванов, И.В.Васильев вӑрҫӑ участникӗсем, М.З.Васильева тыл ӗҫченӗ саламлӑ сӑмахсем каларӗҫ.

✵ ✵ ✵

Арккассинчи халӑха Ҫӗнтерӳ кунӗнче кашни ҫулах Ҫӗнӗ Шупашкарти 20-мӗш шкул ачисем саламлаҫҫӗ, кӑҫал та вӗсем хӑйсен юрри-ташшисемпе халӑха савӑнтарчӗҫ, палӑк патне чӗрӗ чечексем хучӗҫ.

Чумкассисемпе Арккассисене ял депутачӗ В.М.Михайлов, вырӑнти ветерансен ертӳҫи К.П.Михайлова, Раҫҫей Федерацийӗнчи Казаксен Союзӗн Чӑваш Республикинчи филиалӗн атаманӗ В.Г.Ефимов саламларӗҫ. В.Г.Ефимов ҫак икӗ яла уява ирттерме спонсӑрла пулӑшу пачӗ, тата палӑксем умне чечек кӑшӑлӗсем хучӗ.

Ытти ялсенче те уяв ҫӳллӗ шайра иртрӗ, кашни ялтах уяв сӗтелӗсем хатӗрлерӗҫ.

**К.МИХАЙЛОВА, Арккасси ялӗ.**

# СЫВЛӐХ КУНӖ

Ишекри вӑтам шкулта сывлӑх кунӗ иртрӗ. Уроксем умӗн пурте усӑ сывлӑша тӗрлӗ хӑнӑхтарусем турӗҫ. Пиллӗкмӗш урока вырӑнти пӗтӗмӗшле практика врачӗн офис ӗҫченӗсем ирттерчӗҫ. Тухтӑрсем аслӑ класра вӗренекенсене гепатит тата СПИД чирӗсенчен епле сыхланмалли ҫинчен ӑнлантарчӗҫ. Кунтах видеофильм кӑтартрӗҫ.

Юлашки уроксенче аслӑ класра вӗренекенсем футболла, унтан волейболла вылярӗҫ. Ҫав вӑхӑтра 5-8-мӗш классем хушшинче эстафета иртрӗ. Футболра та, волейболра та 10-мӗшсене ҫитекенни пулмарӗ. Эстафетӑра вара 8-мӗшсем палӑрчӗҫ.

Сывлӑх кунӗ пуриншӗн те усӑллӑ пулчӗ.

**Сергей СЕМЕНОВ, Ишек шкулӗ.**

✵ Суд залӗнчен

# ШӖВӖРККЕН «ПАТТӐРЛА» ӖҪӖ

**Халӑхра, пӗр ача - ача мар, икӗ ача - ҫур ача, виҫӗ ача - пӗр ача теччӗҫ. Халӗ нумайӑшӗ икӗ ачаран ытла ҫутӑ кун кӑтартасшӑн мар. Виҫҫе ҫитересси пирки калаҫу пуҫлансан ахлатсах яраҫҫӗ. Ваттисем пӗлсех каланӑ ӗнтӗ, хӑйсен сӑмахне. Ашшӗ-амӑшӗн пур ачашлӑхӗ те пӗр ача ҫине ҫеҫ тиенни ӑна ҫӑмӑллӑн ӳсме май парать. Пурнӑҫри йывӑрлӑхсене питех туймасть вӑл.**

Илпешре пурӑнакан Авдей те (ятне улӑштарнӑ) килте пӗр ача пулнӑ. Шкултан панӑ характеристика тӑрӑх, пиллӗкмӗшпе ултӑмӗш классенче вӑл лайӑх вӗреннӗ (Кӳкеҫри пӗрремӗш шкула пиллӗкӗмӗш класран ҫӳреме пуҫлать). Шкулти тӗрлӗ мероприятие активлӑ хутшӑннӑ, кӗнекесемпе интересленнӗ.

Ҫиччӗмӗш класра чухне вара уроксем сиктерме пуҫлать. Ачаранах инвалид пулнӑ пулсан та физкультурӑпа та палӑрнӑ, лайӑх аталаннӑ. Халӗ вара хӑй юратнӑ истори, биологи, географи урокӗсемпе те, физкультурӑпа та япӑх палласем илме пуҫлать. 2005-2006 ҫулсенчи вӗренӳри пӗрремӗшпе иккӗмӗш чӗрӗксенче 49 кун шкула пыман. Вӗсенчен 29-шӗ сӑлтавсӑр. Ҫакӑншӑн ӑна иртнӗ ҫулта шкулта учета илеҫҫӗ, профилактика ӗҫӗсем ирттереҫҫӗ. Пулӑшмасть. Ҫакна килтисем те вӑхӑтра асӑрхайман пулмалла. Следстви вӑхӑтӗнче те, судра та амӑшӗ ӑна хӳтӗлеме пӑхнӑ пулин те, вӗсен тӗпренчӗкӗ кунсерен тенӗ пекех сулахаялах сулӑннӑ.

Иртнӗ ҫулхи декабрӗн 18-мӗшӗнче вара, 13 ҫулхи шӗвӗркке, ҫул ҫитмен тепӗр икӗ ачапа хӑйсен ялӗнчи пӗр килтен чӳрече ҫӗмӗрсе 6775 тенкӗлӗх япала илсе тухаҫҫӗ. Ӗҫ-пуҫ ҫакӑн патне ҫавранса ҫитесси малтанах паллӑ пулнӑ, анчах та ҫамрӑксен ҫулне ҫирӗппӗн никам та пӳлеймен. Саккунпа 14 ҫул тултарман ҫамрӑксене уголовнӑй йӗркепе айӑплама юрамасть. Ҫавӑнпа та Федеральнӑй судья Авдее криминал тӗнчипе ҫыхӑннӑ ҫамрӑксене яракан Шупашкарти вӑхӑтлӑх центра 30 кунлӑха ямалла тӑвать.

Ҫак йышӑнупа амӑшӗ килӗшмен. Верховнӑй суда ҫӑкав ҫырать. Анчах та районти приговора ҫӳлтисем те вӑйрах хӑвараҫҫӗ. Ҫак айӑплав ҫамрӑксемшӗн кирлӗ урок пултӑрчӗ ҫеҫ.

**П.ПАВЛОВ.**

✵ Ыран - Пӗтӗм тӗнчери музейсен кунӗ

# КИТАЙЛА ВӖРЕНТЕКЕН ШКУЛ УҪНӐ

**Тӗнчипе паллӑ ентеш Н.Бичурин хӑй тунӑ тӗпчевпе ҫыру ӗҫӗсемсӗр пуҫне Китай ҫинчен калакан нумай кӗнеке илсе ҫитерет тӑван ҫӗршыва. Шӑпах ҫав кӗнекесем ӗнтӗ Петербургри Публичнӑй библиотекӑра та, Раҫҫей аслӑлӑх академийӗнче те китай фончӗн пуҫламӑшӗ пулса тӑраҫҫӗ.**

Бичурин тата унӑн ӗҫӗсем витӗм кӳнипе 19 ӗмӗрти Раҫҫейри вырӑс синологӗсемпе монголистсен шкулӗ аталанать. Хӗвул тухӑҫ Ази халӑхӗсен историне, экономикине, ӑс-хакӑлне тӗпчекен ӑсчахсен йышӗ самай ӳсет. Анчах нихӑшӗн ячӗ те Иакинф аттенни пек ун чухнехи обществӑлла литература хутшӑнӑвӗсенче пӗлтерӗшлӗ пулман. Поэт-классик А.С.Пушкин та хӑйӗн «Пугачев историйӗ» кӗнекинче Иакинф ал ҫырӑвӗсемпе усӑ курнӑ. Бичурин калавӗсене вуласа пуль аслӑ поэт Китая каяс ӗмӗтпе пурӑннӑ. Никам та Бичуринччен вырӑс тата тӗнче наукинче Китай халӑхӗн историлле ҫӑл куҫӗсен чӑн куҫарӑвӗпе паллаштарман. Палӑртмалла, историлле хайлав яланах географи сӑнлавӗпе килӗшсе тӑрать. Бичуринӑн вырӑнне географи наукинче тӗпчемен-ха хальлӗхе. Анчах та Вырӑс Географи обществин никӗслевҫисен шутӗнче ун ячӗ хисеплӗ вырӑнта.

18 ӗмӗрти 20-мӗш ҫулсем пуҫламӑшӗнчех китай, маньчжур, монгол, япони чӗлхисене вӗрентесси ҫинчен ӑсчахсем те, политиксем те шутланӑ. Бичурин вара вӗренӳ кӗнекисемсӗр малалла ҫул ҫуккине ӑнланнӑ. Ҫавӑнпа Китайра миссинче чухнех ку ӗҫе пуҫӑннӑ. 1829 ҫулта «Китай грамматикин тӗп правилисем» кӗнеке кӑтӑрлесе ҫитерет, унпа Пекина тухса каякан 11-мӗш миссине йӗркеленӗ чух пӗрремӗш хут усӑ курать. 1835 ҫулччен ку пӗртен-пӗр вӗренӳ кӗнеки пулнӑ. 1930 ҫулта Кяхтӑра купсасемпе килӗшсе кунта пӗрремӗш китай чӗлхине вӗрентекен шкул йӗркелет ӑсчах. 12 арҫын ача та 10 уйӑх хушшинче китай грамматикипе калаҫу чӗлхине вӗренеҫҫӗ. Шалу илмесӗр, пӗчченех Н.Я.Бичурин ачасемпе ӗҫлет. Ун хыҫҫӑн Петербурга таврӑнать. 1834 ҫулта Кяхта таможни Ази департаментне ҫыру ҫитерет: «Икӗ ҫуллӑха Иакинф аттене Китай чӗлхи вӗрентме чӗнсе илетпӗр». Вӑл вӑхӑта «Китай грамматикин» хатӗр пулнӑ, анчах пичетрен тухман. Патша хушӑвӗпе Иакинф атте манахпа Крымский советника китай чӗлхине вӗрентекенсем пулма Кяхтӑна янӑ. Официаллӑ майпа 1935 ҫулхи май уйӑхӗнче Раҫҫейре пӗрремӗш вӗренӳ учрежденийӗ, чӑн китай чӗлхине вӗрентекен шкул уҫӑлнӑ. Бичурин унӑн 4 ҫуллӑх вӗренӳ программине хатӗрлет. 22 ача 21 ҫула ҫитиччен китай чӗлхипе пӗрле Турӑ саккунӗсене, вырӑс чӗлхипе арифметикӑна вӗренеҫҫӗ. Кяхтӑра суту-илӳ ӗҫне аталантарма кирлӗ, китай чӗлхипе аван калаҫма пултаракан вӗренекенсене салтак хӗсметӗнчен те хӑтарма ирӗк панӑ. Китай грамматикин 2 пайне те кунта ӗҫленӗ чухнех хатӗрлесе ҫитерет Иакинф атте. Вӗренӳ йӗркине пӑсмасӑрах ӑсчах Цин империйӗн саккунӗсен пуххине куҫарма май тупать. Унсӑр пуҫне историпе этнографи тӗлӗшӗнчен Маньчжури, Монголи, Байкал тӑрӑхӗнчи ҫӗрсене тӗпчев ӗҫӗсенче тишкерет.

1837 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче Н.Бичурин училищӗне К.Г.Крымские парса хӑварать. 35 ҫул хушшинче ку шкултан сахал мар куҫаруҫӑн ячӗ Раҫҫейпе Китай хушшинчи политикӑпа экономикӑна аталантарнӑ хутшӑнусенче палӑрнӑ. Анчах та Крымский вилсен китай чӗлхин училищине хупаҫҫӗ. 2 хутчен Кяхтӑна ҫул ҫӳреве тухса килнӗ Н.Бичурин пурнӑҫӗнчи тапхӑрӗ вырӑс наукишӗн усӑллӑ пулни куҫкӗрет. Раҫҫейре тӗнчипе пӗрремӗш хут пирӗн ентеш пуҫарӑвӗпе Китай чӗлхин вӗрентӗвӗн йӗрки никӗсленнӗ, унпа пӗрлех вырӑс китаеведени аслӑлӑхӗ те.

**О.ПАВЛОВА, музей специалисчӗ.**

✵ Укҫа-тенкӗ

# ПУРЛӐХ, ХЫСНАНА ПУЛӐШ

Муниципаллӑ пурлӑхпа усӑ курасси енчен хама та, никама та текен принцип ҫук районта. Хӑшӗсене тара параҫҫӗ, теприсене аукцион е конкурс ирттерсе сутаҫҫӗ. Пӗлтӗр уйрӑмах нумай тупӑш панӑ ҫакӑ.

Район пуҫлӑхӗн ҫумӗ - экономика, пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен управленийӗн пуҫлӑхӗ А.Е.Егорова пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫурт-йӗрпе кӑна мар, ҫӗрпе те тивӗҫлипе усӑ кураҫҫӗ. Ҫӗр сутнипе пӗлтӗр райбюджета 1792 пин тенкӗ, тара панипе 5884 пин тенкӗ укҫа кӗнӗ. Ҫак цифрӑсем виҫӗм ҫулхинчен 14 тата 3,3 хут пысӑкрах. Пурлӑха тара панипе те тупра самай килнӗ, ӑна пула кӑна - 633 пин тенкӗ (малтанхи ҫулхинчен 12 процент ытларах). Пурӑнмалли мар фонда аукционта пӗлтӗр 517 тӑваткал метр сутса район хысние 1900 пин тенкӗ укҫа кӗнӗ. 2005-мӗш ҫулхинчен ку вӑл 14 хут нумайтарах.

**В.ЭВЕРККИ.**

✵ Шалу

# БЮДЖЕТНИКСЕН УКҪА ӲСЕТ

ЧР Министрсен Кабинечӗн ҫак кунсенче иртнӗ ларӑвӗнче йышӑннӑ тӑрӑх, Чӑваш Енри бюджетниксен те май уйӑхӗнчен ӗҫ укҫи 15 процент хӑпармалла.

Бюджет тытӑмӗнче ӗҫлекенсен хушса тӳлекен мӗнпур укҫи сыхланса юлӗ.

**Т.ИВЕРИНА.**

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

## ÇАВАЛ ТĂРĂХĔСЕМ ИЛЕМЛЕНЧĔÇ

Пĕлтĕр кĕркунне Юртукасси патĕнчен иртекен Çавал юппине хăйĕн малтанхи еккипе юхмалла турĕç. Икĕ çул пычĕ объектри ĕç. Ял халăхĕ ахрат çырми пек çĕре çĕмĕрсе пыракан юхан шывран сехĕрленмеллипех сехĕрленсе ӳкнĕччĕ. Электричество линийĕн юписем, мехпарк, асфальт çул, дачăсем - йăлтах ишĕлсе шыва кайма пултарнăçке. «Чувашгидроводхоз» институчĕ тунă проектпа ĕçе пикенсен Юртукассисем «пулса пĕтĕши кусен» тесе шанмасăр туха-туха пăхнă. Пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ ку ыйтупа депутатсем те, ял активĕ те калаçу пуçарнă, анчах татса памалли çул-йĕр çапах тупăнман, юхан шыв сарăлса, çĕре çĕмĕрсех пынă. 2003 çулта тинех укçа-тенкĕ уйăрсан «ГЭСстрой» АУО УМСМ пысăк калăпăшлă ĕçе пикенет. Экологишĕн те, çынсен пурнăçĕшĕн те пысăк хăрушлăх кăларса тăракан ыйтăва тинех татса пама пуçласçĕ. Çавал валли 1440 метр тăршшĕ урăх юпă чаваççĕ, шыв илнĕ вырăна 284 пин куб тăпрапа тултараççĕ. Халĕ кунта тип-тикĕс вырăн, пĕчĕк уя сухаланă. Унта купăста лартма палăртаççĕ.

Иртнĕ эрнере пĕлтĕр хута кайнă объекта проектант - институт директорĕ И.А.Алексеев, подрядчик - ертӳçи В.П.Вавилетта, республикăри Тури Атăлçи бассейнĕн управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.И.Мирхолова, район ертӳçи А.П.Князев, Тутаркасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.А.Елимов, ял çыннисем пуçтарăнчĕç, Раççей телевидени валли сюжет ӳкерчĕç. Анатолий Пантелеймонович палăртнă тăрăх, экологи проблемине татса пани ял хуçалăхĕнчи ĕçсене йывăрлăх кӳрсе тăракан ыйтăва та сирме пулăшнă. Юхан шыв сарăлса кайнине пула тракторсен тавра çулпа, чăнкă çырма тăрăх хăпарма лекнĕ, халĕ тӳрремĕн кайма пулать-мĕн. Кунта çуралса ӳснĕ Ю.П-.Ильина ĕлĕк ку тăрăхра çăра уран чупнине, вĕренме çӳренине аса илчĕ. Шкул вырăнне халĕ шкул пахчинчи юлнă йывăçсем кăна аса илтерсе лараççĕ.

Шкул çуртне пăснă хыççăн кунта ферма купаланă, анчах халĕ унран нимĕн те юлман ĕнтĕ. Çапах аслă ăрури çынсен асĕнче Çавал çумĕнчи илемлĕ вырăнсем. Çуркунне пăр кайса пĕтсен кимĕпе Шуршăла çитиччен ярăннисем асран каймаççĕ.

Пĕлтĕр кĕркунне ял çыннисем пуçарнипе çăл куçĕпе çуммăн ретĕнретĕн хыр тĕммисем лартнă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ку вырăна йăлтах хăтлăлатасси пирки асăнчĕ. Ку ĕçсене пурнăçлама бюджет уйăрса хăварнă ĕнтĕ. Валак çийĕн тăрă витĕç, илемлетĕç, саксем вырнаçтарĕç. Кĕркунне хурăнсем лартма тухĕ ял халăхĕ. Вара чăн-чăн кану паркĕ пулĕ. Мĕнех, эпир те унта çитĕпĕр, хĕртекен хĕвел айĕнче тăрă сивĕ çăл куç шывне рехетленсе ĕçĕпĕр...

**А.ИЗМАН.**

❋ Çул çӳрев

## НАЦИ ПАРКĔНЧЕ

**Нумаях пулмасть «Asio» экологи клубĕ «Чăваш вăрманĕ» наци паркне экспедицие кайса килчĕ. Унта эпĕ те хутшăнтăм. Малтан пире Шăмăршăна илсе кайрĕç. Кунта яштака хырсем, шурă хурăнсем, çӳллĕ чăрăшсем нумай. Вăрман симĕсленме çеç тытăннă-ха. Тĕрлĕ кайăк сасси вара чуна савăнтарать, пĕтĕм тавралăх ыйхăран вăраннă тейĕн. Сывлăш уçă та таса, курăк шăрши сарăлать.**

Шăмăршăран пире Кучек ялне илсе кайрĕç. Вăл центртан 18 километрта вырнаçнă. Ку пĕчĕк яла пĕтĕмпех вăрман хупласа илнĕ. Пире (5 шкул ачине, 2 студента тата «Asio» экологи клубĕн руководительне А.А.Яковлева) лесник çуртне вырнаçтарчĕç. Кăмака хутса çурта тирпейленĕ хыççăн апат пĕçерсе çирĕмĕр те вăрмана экскурсие кайрăмăр. Чи малтан эпир çӳл тӳпери хăлата асăрхарăмăр. Вăл пире кĕтсе илнĕнех туйăнчĕ, пуç тӳпинче явăнчĕ-явăнчĕ те вăрман çийĕн кăнтăр енне çул тытрĕ. Вăрмана кĕнĕкĕменех вĕлтрен тăрри хăйĕн юррине шăрантарнине илтрĕмĕр.

Кунта эпир каçченех пултăмăр, вăрман пире ырăн кĕтсе илнĕн туйăнчĕ. Пирĕн чăваш вăрманĕ çав тери пуян та илемлĕ тесе нихăçан та шутламан.

Тепĕр кунне эпир кайăксемпе çеç мар, çĕленкалтапа та паллашрăмăр, карăк йăви тĕлне пултăмăр, чие кайăкĕ мĕн тери илемлине пĕрремĕш хут куртăмăр. Мĕн тĕрлĕ кайăк çукши ку вăрманта: хурчка, пăрчăкан, çирĕктăрри, уйăп, куккук, пăчăр, тăмана, пилеш кайăкĕ тата ытти те.Хурăн пуçлă çĕлене тытма пире лесник йытти Барсик пулăшрĕ. Вăл пирĕнпе туслашсах кайрĕ, пĕр экскурсирен те юлмарĕ. Хура çĕлене те вăлах тупрĕ. Кунта йăрă калта тата чĕррĕн çутатакан калта те пур. Мĕн пысăкăш шапасем тата, ал лаппинче те вырнаçмаççĕ. Ялтан инçех мар эпир упа, хăнтăр, пăши, хир сысни йĕррисене тупрăмăр.

Походра эпир 8 кун пултăмăр, нумай куртăмăр, пĕлтĕмĕр. Çак кунсем ман асăмра ĕмĕрлĕхе юлĕç. Кунта эпир руководитель тăрăшнипе лекрĕмĕр. Вăл пире кайăксене, чĕр-чунсене, йывăç-курăка паллама, çут çанталăка упрама вĕрентрĕ. Тавах сире, Александр Алексеевич!

**П.РАДИКОВ, 10-мĕш класс.**
**Çĕньял-Покровски шкулĕ.**

❋ Тасалăх

## *КУ КОЛЛЕКТИВЛĂ САДА ÇЫН АЛЛИ ÇИТĔ-ШИ?*

**Хула çывăхĕнчи район пирки пирĕн тăрăхра коллективлă садсем йышлă. Дачăсем патĕнчен иртнĕ чух уйрăм пахчасенчи тирпей-илем чуна савăнтарать. Ишлей ял тăрăхне кĕрекен «Романтика» пирки те çавна калама пулать. Хăшĕсен участокĕсенче чечексем ешереççĕ. Илемлĕ мар-и? Анчах кăмăла пăсаканни тата нумай.**

Ишлейрен Курак-Чурачăка каякан çул айккинче тасамарлăх. Çӳп-çап контейнерĕсем пур-ха, анчах пурте яланах тулли, теприсем чалăш выртаççĕ. Йĕри-тавра тасамарлăх хуçаланать. «Пластмасса савăт-сапана çунтарма юрамасть-ха, анчах турата мĕншĕн çакăнта илсе туха пересçĕ-ши?» - пуçне ватать «Районăн экологи хăрушсăрлăхĕн управленийĕ» муниципаллă предприяти пуçлăхĕ Р.В.Данилов.

Тунти кун унпа ятарласа вăл тăрăха çитсе килтĕмĕр. Тасамарлăхшăн явапли - сад юлташлăхĕн пуçлăхĕ. Вăл хальхи вăхăтра больницăра-мĕн. Ишлей ял тăрăхĕн те хăйĕн территоришĕн пăшăрханмалла. Тасаттарма пулнă-мĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Я.В.Кушев. Ку аван-ха. Анчах пĕр ыйту сиксе тухать: контейнерсем пĕр кунта тулса кайман-тăр вĕсем? Маларах йĕрке тума, çитменнине, район администрацийĕн пуçлăхĕн ятарлă йышăнăвĕпе иртерне уйăхлăх пĕр уйăха пычĕ марри вара, ал çитмен-шим?

«Шел, анчах кун пек лару-тăру «Романтикăра» кăна мар», - пĕлтерет Ростислав Васильевич. Сад юлташлăхĕсен пуçлăхĕсем йĕрке туса çитерейместĕ пулсан, ял тăрăхĕсенех пуç ватмалла. Мĕншĕн тесен тавралăха санитари тĕлĕшĕнчен тытса тăрассишĕн вĕсем явапли. Ответ тыттарасси - милицин участок уполномоченнăйĕсен, малтанхиллех каласан участковăйсен, тивĕçĕ.

Ишлей тăрăхнех тепре таврăнарха. «Романтика» юлташлăхран Ишлей еннелле пынă чух пĕр машина çул айккине территорие пуçтарнă хыççăнхи тасамарлăха пырса тăкрĕ. «Чувашвторчермет» АУОн Шупашкарти цехĕ» тесе палăртнă путевкăри пичет çинче. «Грунт» çырса хунă çав хут çине. Анчах тăпрапа хутăш тимĕр-тăмăр та, машина урапи те пур.

Эпир ăнланнă тăрăх, асфальт çул çинчен пурăнмалли çуртсем патне кĕме çул тăвасшăн. «Ирĕк панипех турттаратпăр», - ăнлантарать водитель. Вăл каланă тăрăх, предприяти ертӳçисен Ишлей ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе калаçу пулнă-мĕн. «Хăрушлăх енчен 3-мĕш класс», - хаклать Р.В.Данилов предприяти турттаракан, машина çăвĕпе хутăш тасамарлăха.



В.Иванова фото ӳкерчĕкĕ.

Тасамарлăх пирки калаçатпăр пулсан, кунпах вĕçленмест-ха вăл. Ишлей ялĕнче хăйĕнче те тирпейлемелли пур. Тĕп урамрах пирки пушшех çын куçне тăрăнать...

**❋ Çакăн пек вырăнсем «Романтика» коллективлă пахча уменче пĕрре кăна мар.**

❋ Пĕлме интереслĕ

## АЛЛĂ ÇУЛ КАЯЛЛА ÇУХАЛНĂ УЛАТАККА ТУПĂННĂ

«ASIO» экологи клубĕн сайчĕ пĕлтернĕ тăрăх, сахалтан та çур ĕмĕр каялла Çĕр çинчен çухалнă (çапла шухăшланă ун пирки орнитологсем) шур сăмсаллă улатакка тупăннă. Çав кайăк-Америкăри чи пысăк улатакка. Ăна Корнеуэл университечĕн орнитологи лабораторийĕн экспедицийĕ «Пысăк вăрман» текен тăрăхра кăçалхи апрелĕн 25-мĕшĕнче асăрханă.

Ученăйсем чĕпĕ кăларма пултаракан пĕр мăшăр та пулин сыхланса юлма пултарнă теççĕ. Апла пулсан, шур сăмсаллă улатакка Çĕр çинче юлнă кăна мар, пурăнĕ те.

## *САВĂТ-САПА ТА ТАСА, ТАВРАЛĂХ ТА*

Савăт-сапа çумалла-и е кĕпе-йĕм - мĕнле кăна хатĕр çук-ши паян хуçалăх таварĕсен лавккисенче?.. Укçу пулсан тем те туянма пулать. Анчах ал айĕнчи япаласемпе те тасатма пулать чылай чух. Кун пек туни укçана перекетлеме май пани пĕрре, тепре вăл - тăван тавралăхшăн сиенлĕ мар.

Горчица порошокĕ савăт-сапа çинчи çăва лайăх тасатать, çăм тата пурçăн япаласене çума аван. Горчица садпахчари сăтăрçăсемпе те кĕрешет. Вегетаци вăхăтĕнче улма-çырла йывăççисене горчица шывĕпе 2-5 хут сапсан лайăх тухăç илесси пирки иккĕленме кирлĕ мар.

❋ Ачасен пултарулăхĕ

## САРЛАКА МАН ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ

Чăваш çĕрĕ - пирĕншĕн атте те, анне те, тăван пичче те.

Ку çĕр - сăвапла та таса. Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак. Унăн нӳрлĕ тăмĕ - ылтăн, типĕ чулĕ - кĕмĕл. Тепĕр тесен тĕнчере тăван кĕтесрен, тăван çĕртен, тăван халăхран хакли нимĕн те çук.

Эпĕ тăван çĕрĕн ытарайми вăрманĕсене те юрататăп. Унта темĕн тĕрлĕ йывăç-курăк, кайăккĕшĕк пур. Вăрман хĕрринчи асамлă кӳлĕсем хăйсен илемĕпе çав тери куçа илĕртеççĕ, канма сĕнеççĕ. Вăрман халăха хăйĕн пуянлăхĕпе те, ытти енчен те нумай усă кӳрет. Вăл хĕл сиввинче те хӳтлĕх тытать, уяр, шăрăх кунсенче нӳрлĕх парать, юхан шывсене те типме памасть. Вăрман хушшинчен тухакан çырмасенче хĕлĕн-çăвĕн тăрă шыв шăнкăртатса юхать. Вăл çĕршыв сăнне илемлетет, сывлăша уçăлтарса çемçетет, çанталăка лайăхлатать.

Юрататăп эпĕ хамăрăн республикăна, атте-анне çĕрне. Хăйсен çĕрне чăвашсем, ытти халăхсем пекех, Çĕр-анне теççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем юмана юман-атте, çăкана çăка-савни теççĕ. Чăвашсем мĕн авалтанах çĕр çинче ĕçлесе пурăннă, çĕр ĕçне лайăх пĕлнĕ. Çĕр те хăйне юратакансене кăмăлланă: пуян тыр-пул пехилленĕ.

Ахальтен каламан ваттисем: «Тăван йăваран хакли нимĕн те çук». Чăнах та кирек ăçта çитсессĕн те хăвăн тăван аçупа аннӳне, тăван яла, тăван кил-çурта нихăçан та манса каймастăн. Пурпĕрех сана хăв çуралнă Тăван çĕршыва чун туртать.

Мĕн чухлĕ сăвă, юрă шутласа кăларнă паллă сăвăçсем çак темăпа. Пĕтĕм чун-чĕререн тухнă ăшă сăмахсемпе усă курнă вĕсем. Тăван çĕршывпа хӳтĕлес тесе миçе çын пуçне хунă. Вăрçă вăхăтĕнче кашни çемьерех çав хуйха-суйха тӳссе ирттернĕ. Халĕ вара эпир мирлĕ пурнăçпа пурăнатпăр. Çавăнпа та пирĕн Тăван çĕршыва хӳтĕлесе тăмалла, паттăр пулмалла.

**Юлия КОЛЬЦОВА, 6-мĕш класс.**
**Мăн Марка шкулĕ.**

## *ПĔР КУНТА - ИКĔ НИМЕ*

### Кунта йывăççсем ешерĕç

Ниме вăл - халăх пуçтарăнса пысăк ĕç туни. Вырăсла ăна «субботник» теме пулать. «Шупашкар тавраш» ентешлĕх пуçарнипе нумаях пулмасть Ункă юхан шыв хĕррипе (Ишек пасарĕпе юнашар) чăрăш, хыр, ăвăс тата ытти йывăççсем лартрĕç. Ĕçлеме халăх йышлăн пуçтарăнчĕ. Уйрăмах Ишек тата Чăрăшкасси шкулĕсенче вĕренекенсем тата вĕрентекенсем пухăнчĕç. Вĕсемпе пĕрлех ентешлĕх канашĕн председателĕ В.А.Кушников, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Н.Мустаев, Ишек ял тăрăхĕн ертӳçи Г.С.Смирнов, Депутатсен райпухăвĕн депутачĕ З.Ф.Петрова, Ишлей кирпĕч завочĕн ĕçченĕсем тата ыттисем те çанă тавăрсах ĕçлерĕç. Пĕрисем лартса пычĕç, теприсем - шăварса.

### Площадка хатĕр

Шоркка ялĕнче пурăнакансем те çак кунсенче ырă ĕçпе палăрчĕç. Вĕсем тавраш халăх валли футбол площадки хатĕрлерĕç. Мечĕк тапса кĕртмелли хапхана Ишлейри кирпĕч заводĕнче ятарласа хатĕрленĕ, вырнаçтарса лартма та унтан килнĕ. Çакăнта И.Ефимов, В.Грошев тата Н.Гордеев лайăх ĕçленĕ.

Çатра-Хочехмат шкулĕнче вĕренекенсем площадка тума уйрăмах хастар хутшăннă. Уйрăмах Артем Александров, Толя Захаров, Людăпа Дима Трифоновсем тата Марина Богданова палăрнă.

**Н.ПЛАТОНОВ, район депутачĕ.**

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

Зинаида ВАСИЛЬЕВА

## ХУРЛĂХЛĂ ЧАН САССИ

Калав

Çуллахи илемлĕ ир. Кайăксен юррипе чан сасси илтĕнет. Чиркӳ чанĕ пĕр чарăнмасăр çапать, унăн хурлăхлă сасси чуна тивсе ӳт тăрăх сăрласа иртет... Анчах мĕншĕн паян çапаççĕ-ха ăна? Илен кунĕ виçĕм кун пулчĕçке. Чан пĕр чарăнмасăр çапать, çынсене хăй патне йыхăрать.

Чиркӳ картишне чылайăн пуçтаранннă. Пурте шăп тăраççĕ, пуçĕсене хурлăхлăн çĕр çинелле пĕкнĕ. Чиркӳ алăкĕ умĕнче - тупăк... Ял çыннисем чунтан-вартан ĕненсе, тĕрĕс çулпа утакан тăхăр вун икĕ çула кайнă таса хĕр Альтукпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашма пуçтаранннă.

Тупăкра, хăйĕн юлашки çуртĕнче, куçне хупнă Альтук аппа выртать, ĕçлесе ывăннă хыççăн канма выртнă евĕр, лăпкăн çывăрать.

Акă тупăка чиркĕве илсе кĕчĕç. Пурте алла çурта тытса ун тавра тăрса тухрĕç. Пачăшкă вилнĕ çынпа уйрăлмалли кĕлĕ пуçларĕ. Çывăх тăванĕсен куçĕсенчен куççуль юхать. Ырă çын вилсен, ырă ят юлать, теççĕ халăхра. Çын мĕнле кăмăллă пулни тата çак тĕнчере ырă е усал ĕç тунине вилсен пĕлме пулать, теççĕ. Юлашки çула ăсатнă кун илемлĕ те лăпкă пулсан, çын пурăннă чухне тĕрĕс çулпа утнă, ырă кăмăллă пулнă теççĕ. Мĕнле çын пулнă-ши Альтук аппа?

Кинемей 1911-мĕш çулта хир тăрăхĕнчи Хурăнвар ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕпе амăшĕн, Хветĕр тетепе Марье аппан, 8 ача пулнă: 5 арçын ача тата 3 хĕр. Вĕсенчен пĕри - Альтук. Ачасене тĕрĕс çул çине тăратас, вĕсем сăпайлă та ĕçчен пулччăр тесе тăрăшнă. Ачасем пилĕк çула çитсенех çурла тытса ашшĕ-амăшĕпе юнашар тырă вырма пуçланă. Кӳршĕсем тĕлĕннĕ вара. «Пуян çыннăн кушакки те тилĕ тытать-мĕн, тĕрĕсех иккен»,- тенĕ вĕсем çинчен. Чăн та, ĕçе чуна парса, ырми-канми ĕçлекен, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхмен çын ĕлĕкех пуян та сумлă çын шутĕнче пулнă. Хĕвелпе пĕрле тутлă ыйхăран вăраннă та лаша кӳлсе уя тухнă.

«Çĕр пире тăрантарать, çĕре юратăр, вăл вара сире çăкăр та, тумтир те парĕ»,- тесе вĕрентнĕ ачисене Марье аппа.

Вăхăт иртнĕçем Альтук та хитре хĕр пулса тăнă. Хĕрĕ амăшнех пăхнă: хура куçлă, çавракa та хитре сăн-питлĕ. Ытарма çук хитре хĕре кам юратса пăхмĕ! Ал туни пек икĕ хулăн çивĕчĕ пилĕкрен те аялалла усăнса тăрать. Тăпăл-тăпăл кăкăрĕсем, çинçе пилĕкĕ хĕр пиçсе çитнине пĕлтереççĕ. Нумай каччă çуннă Альтукшăн. Анчах та хĕре пĕр сăпай каччă çеç килĕшнĕ. Ку вăл - кӳршĕ ачи, Трахвин. Çамрăксем, пĕчĕкренех пĕрле выляса ӳснĕскерсем, пĕрпĕрне юратса пăрахаççĕ. Трахвин, хĕрĕн илемне курса, куçран пăхма та вăтаннă.

(Малалли пулать.)

✵ Спорт

## РУБИН КУБОК – «ЗВЕЗДА-ИЗВАра»

**Сосновка поселокĕнче çулсерен иртекен футбол турнирĕ виçĕ куна пынă.**

«Стройкомплект Рубин» тулли мар яваплă пĕрлешӳ директорĕ ĕçне туса пыракан А.Галкин пуçарăвĕпе турнира кăçал 5 команда хутшăнчĕ: Шупашкарăн «Энергия», «Крылья-2», «Волга - МАДИ», «ЗЭИМ-ЛАЙН-2» тата пирĕн районти «Звезда-ИЗВА».



«ИЗВА» ООО генеральнăй директорĕ пирĕн районти футбол клубне кашнинчех пулăшать-ха. Хальхинче вăл тăрăшнипех турнира çамрăксем хутшăнчĕç. Юлашки кунĕнче Виктор Андреевич ăмăртăва ăнăçу сунса кăларса яни сăмах çинех пулнă - пирĕннисем каялла «Рубин Кубокпа» таврăннă.

Командăн начальникĕн М.Е. Орловăн шухăшĕпе Андрей Горшков, Алексей Гурин, Сергей Крылов тата Сергей Коскелайнен çамрăк футболистсем палăрнă.

Ачасен паян лăпланса ларма вăхăчĕ те çук. Çĕнтерӳçĕ ятне тытса пырасах пулать-çке. Çитменнине Чăваш Республикин Кубокĕ шучĕпе иртекен официаллă вăйă майăн 8-мĕшĕнче Ишлейри стадионта иртрĕ. Çăлтăр хальхинче «Энергия» командăпа тупăшрĕ.

**А.СУСМЕТ.**

**✵ «Звезда-ИЗВА» команда тренерĕ С.Романов «Рубин Кубокпа».**

## ЛАШАСЕНЕ РЕКЛАМА КИРЛĔ

«Прогресс» ЯХПК-ра мăйракаллă шултра выльăх, сысна ĕрчетессипе пĕрлех ăратлă лаша тытассипе те тимлеççĕ. 64 пуçшăн республика дотаци те уйăрать. Вĕсен вăйĕпе хуçалăхра усă кураççĕ. «Лаша



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

пек тăнлă выльăх çук»,- тет кооператив ертӳçи В.И.Яковлев,- бензин тавраш ыйтмасть, техника тытнинчен усрама та тухăçлă». Çапла. Анчах та вĕсене тытмалли майсене лайăхлатас ыйту хуçалăхра пуçласа тăмасть ĕнтĕ. Хупмалли икĕ вите пурха. Анчах пĕри уйрăмах кивелнĕ. Картишĕ кăнтăрла тăратма кăна каять. Сĕт-çу тата лаша фермисен заведующийĕ В.Г.Ефремов чĕлхесĕр январсене çав тери кăмăллать. Ăратлă выльăх валли çĕнĕ вите, уçăлтарма ипподром пекки тăвас ыйтăва министерство шайĕнче çĕкленĕ. Хăй лаша пăхакан пулса ĕçлеме хирĕç мар. Кăçал вара район ертӳçи сĕнсен, «Прогресс» лашисене реклама тума, Акатуйри ăмăртăва хутшăнма икĕ пуç хатĕрлеме кăмăл турĕ.

**А.ИЗМАН.**

**✵ Хальлĕхе лашасем кивĕ витепех çырлахаççĕ.**

## АКАТУЯ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Акатуй уявĕ валли культурăпа массăллă мероприятисем йĕркелес тĕлĕшпе районти методика центрĕн уйрăмĕнче ятарлă план хатĕрлеççĕ. Хореографи, музыка композицийĕсем, фольклор блокĕсен ертӳçисене репетицисем ирттерме хушнă. Культĕçченсенчен тăракан пĕтĕçнĕ хор майăн 18, 24-мĕшĕсенче халăх умне тухиччен районти Культура керменне юрласа пăхма пуçтарăнать.

**А.ВАНИНА.**


## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**ООО «Чебоксарская птицефабрика»**
**реализует:**
**- КУРЫ-МОЛОДКИ 3,5 мес.**
**- ГУСЯТА СУТОЧНЫЕ И ПОДРАЩЕННЫЕ** ланской и венгерской породы.
**- УТЯТА СУТОЧНЫЕ** пекинской породы.
**- ЦЫПЛЯТА СУТОЧНЫЕ** хайсекс-браун.
**- ИНКУБАЦИОННОЕ ЯЙЦО:** гусиное, утиное, куриное.
**Оптовикам скидки!**
**Чебоксарский район, д. Лапсары, Луговая, 31.**
**Тел. 8 (22) 69-43-38, 26-07-87.**

*Пĕрре пăруланӑ хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 89053476303.*

*ООО МСО «Кугесьская» реализует раствор строительный, бетон товарный. Для вывозки выделяется автотранспорт.*


Участник долевой собственности на землепользование СХПК «Атăл» Чебоксарского р-на ЧР Ерманова Юлия Федоровна, прож-я по адресу: Чебоксарский район, д.Вурманкасы, ул.Шоссейная, д.35, сообщает о своем намерении выделить земельные участки по следующим ориентирам (полям, кадастровым номерам, границам) и площадям: 1) в 700 м севернее жилого дома №2а по ул.Прудовая д.Вурманкасы, поле №I полевого севооборота №1, поле №II овоще-кормового севооборота, с кадастровым номером 21:21:10 20 01:0033, площадью 23,52га; 2) в 250 м северо-восточнее жилого дома №2а по ул.Прудовая д.Вурманкасы, поле №II овоще-кормового севооборота, с кадастровым номером 21:21:10 20 01:0034, площадью 1,7090га, в счет 17/1103 долей в праве общей долевой собственности от 1698,26 га. Площадь образуемых участков осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для сельскохозяйственных угодий, в границах которых образуются данные земельные участки. Возражения просим присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления в мой адрес.


*Продаю: пиломатериал хвоя. Дешево. Цены от 1300 руб за 1 м³. Срубы, любой размер на заказ. Тел. 2-22-17; 2-38-66; 67-68-19.*


Участники долевой собственности на землепользование СХПК «Атăл» Чебоксарского р-на ЧР Ерманова Юлия Федоровна, прож-я по адресу: Чебоксарский район, д.Вурманкасы, ул.Шоссейная, д.35, Селедкин Лев Михайлович, Павлов Анатолий Гурьевич сообщают о своем намерении выделить земельный участок по следующим ориентирам (полям, кадастровым номерам, границам) и площадям: 1) северо-восточнее д.Питикасы, поле №IX первого полевого севооборота, участок №3, площадью 24,99 га в счет 17/1103 долей в праве общей долевой собственности от 1698,26 га. Площадь образуемого участка осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для сельскохозяйственных угодий, в границах которых образуется данный земельный участок. Возражения просим присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления в адрес Ермановой Юлии Федоровны.

Предполагается предоставление в аренду земельного участка площадью 1436 кв. м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Хирле-Сир, ул. Лесная, для огородничества.

Участник долевой собственности на землепользование СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского р-на ЧР Иванов А.С., прож-й по адресу: Чебоксарский район, п.Кугеси, ул.Энгельса, д.10, сообщает о своем намерении выделить земельный участок по следующим границам, полям севооборота, ориентирам и площадям: 1) II поле почвозащитного севооборота, 300 м севернее жилого дома №96 по ул.Садовая д.Аркасы, с кадастровым номером 21:21:07 64 42:0103, площадью 2,15га на пашне, для создания личного подсобного хозяйства, в счет 1/1416 долей в праве общей долевой собственности от 2598,54 га. Площадь образуемого участка осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для сельскохозяйственных угодий, в границах которых образуется данный земельный участок. Возражения прошу присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления в мой адрес.

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 133-134 от 19 ноября 2005 года в объявлении собственников земельных долей прошла неточность. Вместо слов «Польков Ю.Б.» надо читать «Польков Ю.Е.».

✵ ✵ ✵

Коллектив МОУ «Абашевская СОШ» выражает глубокое соболезнование преподавателю ОБЖ В.Н.Софронову в связи со смертью

**ОТЦА.**


*Продаем срубы липовые, хвойные разных размеров, столбы, штакетник, брусья для изгороди из дуба, доски разных пород. Выделяется транспорт. Тел.: 2-25-96, 89033798257.*


Предполагается предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21: 065201:0003, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Кодеркасы (земли поселений) для огородничества. Тел.: (8240) 35-2-69.

Предполагается предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,10 га 21:21:065201:0004, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Кодеркасы (земли поселений) для огородничества. Тел.: (8240) 35-2-69.

Участники долевой собственности землепользования СХПК «Атăл» Прокопьев В.П. ,прож. с. Хыркасы, Школьная, 4-4 - 1 доля - 1,47 га, Евдокимова К.Г., прож. д. Кибечкасы, Солнечная, 3 - 1 доля - 0,37 га сообщают о своем намерении выделить земельные участки в поле № 2 второго полевого севооборота. Возражения просим присылать в течение месяца по адресу: п. Кугеси, ул. Шоссейная, 15.

Предполагается предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0987 га с кадастровым номером 21:21:23 0903: 0082, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Больше Котяки, ул. Шоссейная, д. 8 (земли поселений), для огородничества. Адрес: д. Курмыши, ул. 9-й Пятилетки, д. 11, тел. (8240) 44-2-24, администрация Кшаушского сельского поселения.

Участники долевой собственности землепользования СХПК «Атăл» Толстов К.Г. - 1 доля - 0,49 га, Толстова А.Г. - 1 доля - 0,49 га, Толстова Н.Ф. - 1 доля - 1,47 га, Толстова Ю.А. - 2 доли - 0,49; 1,47 га, прож. д. Кибечкасы, ул. Транзитная, 20, Дорогова Н.П., прож. д. Кибечкасы, ул. Елочная, 8 - 1 доля - 1,47 га сообщают о своем намерении выделить земельные участки по следующим ориентирам (полям): в поле № 4 второго полевого севооборота. Площадь образуемых участков осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для с/х угодий, в границах которых образуются данные земельные участки. Возражения просим присылать в течение месяца со дня выхода объявления в наш адрес и в адрес МРО № 5 Управления Роснедвижимости по ЧР (п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 9).


Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН («КРАЙ РОДНОЙ»)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ «Редакция Чебоксарской районной газеты "Тăван Ен"»,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: tavan.ru.@mail.ru; gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП "ИПК Чувашия". Тел.21-00-23.

Дежурный по номеру: А.И.ИЗМАН

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 16.05.2006 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1815. Заказ № .
Индекс газеты - 54820.